20-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАЙ
22
ШАМАТКУН
106(6343) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Çураки вăхăтĕнче пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартса лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, райсовет исполкомĕсем пе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине çаксене кĕртнĕ:

Шăхасан районĕ тăрăх

53. **Тельман ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Ф. Т. Тихонов**). Колхоз тĕштырă культурисене пысăк пахалăхпа 7 кун хушшинче акса пĕтернĕ.

54. **Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **С. Х. Христофорова**). Колхоз çураки планне 108 процент тултарнă, ака ĕçĕсене пысăк пахалăхпа 7 кун хушшинче туса ирттернĕ.

55. **Киров ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **В. С. Степанова**). Колхоз çураки ĕçĕсене пысăк пахалăхпа 7 кун хушшинче вĕçленĕ, çураки планне 108 процент тултарнă.

56. **Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **П. К. Кондратьев**). Колхоз çураки ĕçĕсене пысăк пахалăхпа 6 кун хушшинче туса пĕтернĕ.

57. **Молотов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **П. А. Афанасьев**). Колхоз тĕштырă культурисене пысăк пахалăхпа 6 кун хушшинче акса пĕтернĕ, çураки планне 110,2 процент тултарнă, районра чи малтан çĕрулми лартса тата техникăллă культурăсене акса пĕтернĕ.

58. **«Свобода» колхоз** (председателĕ **М. Т. Титов**). Тĕштырă культурисене колхоз пысăк пахалăхпа 7 кун хушшинче акса пĕтернĕ, çĕрулми лартас плана та пĕтĕмĕшпех тултарнă.

59. **«Парижская Коммуна» колхоз** (председателĕ **А. Архипов**). Колхоз çураки ĕçĕсене пысăк пахалăхпа 6 кун хушшинче туса пĕтернĕ.

Элĕк районĕ тăрăх

60. **«Доброволец» колхоз** (председателĕ **П. А. Бочков**). Колхоз çураки ĕçĕсене 8 кун хушшинче вĕçленĕ, оборона фончĕ валли планран ирттерсе 12 гектар акса хăварнă, ака ĕçĕсене пысăк пахалăхпа туса ирттернĕ.

61. **«Шуçăм» колхоз** (председателĕ **Ф. К. Капитонов**). Колхоз çураки ĕçĕсене пысăк пахалăхпа 8 кун хушшинче туса ирттернĕ, çураки планне 109 процент тултарнă, оборона фончĕ валли 5 гектар акса хăварнă.

62. **«Броневик» колхоз** (председателĕ **Г. М. Матвеев**). Колхоз çураки ĕçĕсене пысăк пахалăхпа 7 кун хушшинче туса ирттернĕ, нимĕç оккупацинчен ирĕке кăларнă районсене пулăшма планран ирттерсе 6 гектар акса хăварнă.

63. **Жданов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **С. Е. Егоров**). Колхоз çурхи культурăсене, çĕрулмине те шутласа, 8 кунта пысăк пахалăхпа акса пĕтернĕ. Оборона фончĕ валли планран ирттерсе 7 гектар акса хăварнă.

Ирхи çĕртме— кĕрхи тырăсен тухăçлăхĕн никĕсĕ

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Доброволец» колхоз тĕштырăсене тата техникăллă культурăсене акса пĕтернĕ хыççăнах ирхи çĕртме сухи тума тытăнчĕ. Кĕрхи тырăсем акма колхоз тăпрари нӳрлĕхе сыхласа хăварма тăрăшать. Паянхи куна 25 гектар сухаланă та ĕнтĕ. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç ăнăçлăн пуçланни çинчен Элĕк, Елчĕк районĕсенчен те пĕлтереççĕ. Елчĕк районĕнче ирхи çĕртме тума 15 колхоз тухнă, МТС тракторĕсем пурте пекех ирхи çĕртме сухинче ĕçлеççĕ.

Вăйлă тырпул туса илессишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн малтанхи тапхăрĕ вĕçленет. Нумай колхозсем кăçал çурхи тырăсене лайăх акса хăварчĕç. Республикăн 11 районĕнчи—Вăрнар, Элĕк, Шупашкр, Советски, Сĕнтĕрвăрри, Ишлей, Красноармейски, Елчĕк, Сĕнтĕр, Калинино тата Комсомольски районсенчи колхозсем çураки планне ăнăçлăн пурнăçларĕç, халĕ планран ирттерсе оборона гектарĕсем акаççĕ, пахча-çимĕçсем лартаççĕ. Социализмлă ялхуçалăхĕнче чи хĕрӳллĕ ĕçсем пуçланаççĕ. Акнă тырăсене лайăх пăхса ӳстермелле, вылăх-чĕрлĕх валли утă çулса хатĕрлемелле, кĕрхи тырăсем акма çĕр сухаласа, сӳрелесе хумалла, тырăсене хăварт пуçтарса кĕртме хатĕрленмелле.

Республикăри колхозсем ирхи çĕртме тумалли тата кĕрхи тырăсем акмалли плана ирттерсе тултарма обязательство илчĕç. Малта пыракан колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем килес çулхи тухăçлă тырпулăн никĕсне çак кунсенче хывса хăвармаллине лайăх ăнланаççĕ. Çавăнпа та çурхи тырăсене акса пĕтернĕ хыççăн тӳрех вĕсем ирхи çĕртме сухине тума тытăнчĕç.

Ирхи çĕртме — агротехникăн паха условийĕ, ăна вăхăтра тунинчен кĕрхи тырăсем пысăк тухăçлă пуласси килет. Вăхăтра, лайăх пахалăхпа тунă ирхи çĕртме çĕре çумкурăкĕсенчен тасатать, тăпран нӳрлĕхне упраса хăварать. Ирхи çĕртме тунă вырăнсенче çеç ыраш тата кĕрхи тулă ăнăçлăн пулнине нумай çулхи опыт çирĕплетсе парать. Партипе правительство кĕрхи тырăсен тухăçлăхне çĕклес тĕлĕшре ирхи çĕртме пысăк вырăн йышăннине ялан асăрхаттараççĕ.

Кăçал кашни колхозăн, кашни МТС-ăн ирхи çĕртме тумалли плана пурнăçламалла çеç мар, тата ирттерсе пурнăçлассишĕн кĕрешмелле. Колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисен çураки ĕçĕсенчен пушаннă пĕтĕм вăя çийĕнчех ирхи çĕртме сухине куçарса памалла.

Ирхи çĕртме тунă вăхăтра машинно-тракторнăй паркăн ĕç тухăçлăхĕ пысăк пулни кирлĕ. Кашни тракторпа куллен 20 сехет хушши ĕçлемелле, сӳрелессине сухаланипе пĕр вăхăтра туса пырас майпа агрегатсем организацилемелле. Вăрнар тата Елчĕк МТС-сенчи трактор бригадисем çуракинче агрегатсемпе ĕçлесе пысăк тухăçлăх кăтартрĕç. Çак практикăна ирхи çĕртме сухи тунă чухне тата анлăрах сармалла. Çураки вăхăтĕнче çамрăк трактористсен ĕçри ăсталăхĕ ӳсрĕ, вĕсем машинăсене лайăхрах ĕçлеттерме вĕренчĕç. Тракторсене техника енчен пăхса тăрас ĕçе тата трактористсен ĕç условине лайăх йĕркелени çеç кирлĕ. Çураки вăхăтĕнче хăшпĕр МТС-сенче куçса çӳрекен мастерскойсем çителĕксĕр ĕçлени курăнчĕ. Çавна пула тракторсем чарăнса тăнисем те пулкаларĕç. Çакăн пек çитменлĕхе малашне тӳсме çук. Куçса çӳрекен мастерскойсем кашни МТС-рах пулмалла, вăл мастерскойсем трактор бригадисене ялан пулăшса тăмалла.

Ирхи çĕртме сухине колхозсен мĕн пур туртăм вăйне кӳлес пулать. Çуракине туса пĕтерни хыççăн, пахча-çимĕçсем лартма тата колхозниксен килвырăнĕсене сухалама туртăм вăйĕ уйăрса панисĕр пуçне, ытти лашасем йăлтах сухара пулмалла. Колхозниксен килвырăнĕсене сухаланă çĕрте тата хуçалăхри вак ĕçсенче вăкăрсемпе ытларах усă курмалла. Ишлей районĕнчи «Красное знамя» колхоз çураки вăхăтĕнче виçĕ вăкăра ĕçлеме хăнăхтарчĕ. Халĕ колхоз хуçалăхри вак ĕçсене çав вăкăрсемпе туса пырать.

Кĕрхи тырăсен пысăк тухăçлăхĕн никĕсне хывса хăварас тесен, вĕсене акмалли вырăна лайăх çемçетни кирлĕ. Колхозăн витисенчи, картишĕнчи тата колхозниксен килĕнчи мĕнпур тислĕке уя кăлармалла. Кĕрхи тырăсем акмалли вырăна акас вăхăт çитиччен лайăх пăхса тăмалла, çумкурăкĕсене шăтса ӳсме памалла мар, культиваци туса тăмалла.

Çураки ĕçĕсем республикăри колхозсенче вĕçленсе пыраççĕ. Колхозниксен массине малашне те пысăк çитĕнӳсем туса ĕçлеме çĕклемелле. Ирхи çĕртме сухине вăхăтра, пысăк пахалăхпа туса ирттересси — колхозсен черетри пысăк задачи. Ăна кашни колхоз, МТС ăнăçлăн пурнăçлама тивĕçлĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 20-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 20-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

Хура тинĕсре, Анапăпа Керчь районĕнче, пирĕн карапсемпе авиаци хăй тĕллĕн çӳрекен 6 баржăна тăшманăн войскисемпе пĕрлех шыва путарнă.

* * *

Майăн 19-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугунçул эшелонне вут тивертнĕ, 2 паровоза çĕмĕрнĕ, артиллерин 6 батарейине пусарнă.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри пĕр участокра тăшманăн 4 полк таран пехоти артиллерипе миноментсенчен вăйлăн персе тăнă хыççăн пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă. Пĕр соединенин боецĕсем нимĕçсене пур йышпи хĕсмăшалсемпе те вăйлăн персе кĕтсе илнĕ, унтан вара контратака тунă. Тăшман пысăк çухатусем тӳссе каялла чакнă. Пирĕн чаçсем трофейсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пĕр чаçăн артиллерисчĕсем тăшманăн позицийĕсемпе унăн çывăхри тылĕсем çине сасартăк вăйлăн пеме пуçланă. Пирĕн артиллери нимĕçсен 6 дзотне вĕсенчи гарнизонсемпе пĕрлех аркатса тăкнă, 4 орудине, 7 пулемет точкине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă тата горючи складне вут тивертнĕ.

* * *

Изюм районĕнче нимĕçсем хăйсен иртнĕ кун çухатнă высотине çĕнĕрен йышăнса илес тесе контратака тунă. Пирĕн подразделенисем гитлеровецсен контратакине сирсе янă. Çав çапăçура тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Лисичанск районĕнче пирĕн чаçсем тăшман çине персе тăнă. Нимĕçсен разведка тăвакан групписем Çурçĕр Донец шывĕн сулахай енне куçма хăтланнă. Пирĕн подразделенисем гитлеровецсене каялла хăваласа янă. Тыткăна илнисем пур. Совет артиллерисчĕсем хăй тĕллĕн çӳрекен пĕр туппа пĕтерсе тăкнă, 2 дзота тата 7 блиндажа ишĕлтерсе антарнă, нимĕç пехотине пĕр рота таран сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Севск районĕнче тăшман пехотин 2 роти çапăçса пырса пирĕн позицисене тĕпчесе пĕлесшĕн пулнă. Совет подразделенийĕсем нимĕçсене хăйсен малтанхи рубежĕсем патне хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 90 вилли выртса юлнă. Пĕр соединенин снайперĕсем пĕр кун хушшинче 70 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Волхов фрончĕн уйрăм участокĕсенче пирĕн чаçсем тăшман çине персе тăнă. Нимĕçсен 13 дзочĕпе блиндажне аркатса тăкнă, боеприпассем тиенĕ 2 вагона сирпĕнтерсе янă, артиллерин 2 батарейине тата миноментсен 3 батарейине пусарса лартнă. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçура 2 нимĕç самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ, нимĕçсен пысăк карательнăй экспедицийĕпе виçĕ кун хушши çапăçса, 200 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. Совет патриочĕсем 2 полевой орудие, грузсем тиенĕ 5 автомашинăна, 2 штаб автомашинине, боеприпассемпе продовольстви тиенĕ 13 лава пĕтерсе тăкнă. Ленинград облаçĕнчи тепĕр отрядăн партизанĕсем минăсем лартса нимĕçсен Чудово станцийĕ патне пыракан çар эшелонне сирпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз, салтаксем ларса пыракан 7 вагон тата танксемпе автомашинăсем тиенĕ 9 платформа ваннă.

* * *

Нимĕçсен 15-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 106-мĕш полкăн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Рудольф Штумпф çапла каласа панă: «Мана çара çак çулхи февральте илчĕç те апрель уйăхĕнче фронта ячĕç. Эпир пынă ротăра мĕнпурĕ те 7 салтак, 2 унтер-офицер тата пĕр офицер çеç тăрса юлнă. Салтаксем питĕ ываннă. Çара иличчен эпĕ Венăра пурăнтăм. Хулара Кельнран, Мангеймран, Гамбургран, Берлинран тата Германин сывлăшран тапăнакан ытти хулисенчен те куçарса килнĕ нимĕçсем туллиех. Венăра Европăри çĕршывсенчен вăйпа илсе килнĕ ютçĕршыв рабочийĕсем те нумай. Французсем, сербсем, бельгиецсем, голландецсем, итальянецсем тата ыттисем те нумай. Çара илсе фронта яракан рабочисем вырăнне ютçĕршыв рабочийĕсем ĕçлеççĕ. Анчах та çав ютçĕршыв рабочийĕсем ĕçлесшĕн мар, вĕсем ытларах пăсма тăрăшаççĕ. Флоридсдорфри автомобиль заводĕнче çара яма хатĕрлесе хунă нумай автомашинăна çунтарса янă. Обер Лаа хулинче тĕштырă склачĕсем çунса кайнă. Венăра час-часах çутă пулмасть. Çавăн пек саботажла ĕçсем кашни кун тенĕ пекех пулаççĕ.

* * *

Дани халăхĕ нимĕç оккупанчĕсемпе активлăн кĕрешет. Свендборгра патриотсем суднăсем тăвакан завода вут тивертнĕ. Пушарта тĕп цехсем, мĕнпур оборудовани тата складсем çунса кайнă. Ольборгра суднăсем тăвакан верфьре типĕ дока сирпĕнтерсе юрăхсăра кăларнă. Тепĕр районра патриотсем чугунçул оборудованийĕ тăвакан завода сирпĕнтерсе янă.

Майăн 21-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем противникпа пĕр-пĕрин çине персе тăнă. Артиллери пенипе тăшманăн 12 дзочĕпе блиндажне çĕмĕрсе тăкнă, тăшман артиллерин тата миноментсен темисе батарейине пусарса лартнă.

Пирĕн летчиксем тата зенитнăй артиллери нимĕçсен 4 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити вĕлернĕ, 2 орудие пĕтерсе тăкнă, тăшман артиллерин пĕр батарейине пусарса лартнă. Старши сержант Шумилин командир пулса ертсе пыракан снайперсен групппи 2 кун хушши засадăра ларса 43 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Красноармеец-снайпер Мигульков юлташ 6 нимĕçе вĕлернĕ, сержант-снайпер Попов юлташ 4 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Севск районĕнче разведка тăвакан группа, старши лейтенант Колбасин ертсе пынипе, çĕрле тăшманăн боевой охраненине тапаннă. Совет боецĕсем 17 нимĕçе, пĕр станковăй пулемета пĕтерсе тăкнă тата питĕ кирлĕ документсем тытса илнĕ. Разведчиксем çакна пĕлсе килнĕ: тăшманăн тылĕнчи чугунçул станцине войскăсемпе боеприпассем турттарса эшелон çитсе тăнă. Пирĕн штурмовик-летчиксем тăшман эшелонне вагонсем çинчен пушатнă чухне атакăланă та бомбăсем пăрахса аркатса тăкнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре сайра хутран артиллери персе тăнă. Пирĕн артиллери 3 дзот, 2 наблюдательнăй пункт ишĕлтерсе антарнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă тата тăшманăн [illegible] батарейи [illegible] ăнăçлăн персе тăнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн артиллери пенипе тата авиаци штурмланипе тăшман артиллерийĕн темиçе батарейине пусарса лартнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Ленинград патне пыракан çулсем çинче зенитнăй артиллери нимĕçсен пĕр истребительне персе ӳкернĕ.

* * *

Украина районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен гарнизонне тапаннă та 40 гитлеровеца вĕлерсе тăкнă. Совет патриочĕсем тырă складне тытса илнĕ те çывăхри ялсенчи тата рабочи поселоксенчи халăха çав тырра 2.000 центнер валеçсе панă.

* * *

Нимĕçсен 134-мĕш пехотнăй дивизийĕн 445-мĕш полкĕнчи 11-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Артур Шмидт çапла каласа панă: «1942 çулхи кĕркуннеччен эпĕ 23-мĕш пехотнăй дивизире тăнăччĕ. Эпĕ нумай çапăçусенче пулнă, Мускав патĕнче нимĕç çарĕсене аркатса тăкнине курса тӳсрĕм. Нумай пулмасть эпĕ 445-мĕш полка лекрĕм. Салтаксен нумайĕшĕн шухăш-кăмăлĕсем начарланни мана хуçса тăкрĕ. Хальхи нимĕç салтакĕ—1941 çулхи салтак мар ĕнтĕ. Вырăссем вăйлăн пырса çапнине тӳссе курнă салтаксем Германи çĕнтерессине пачах та шанмаççĕ ĕнтĕ. Вĕсем Сталинградра, Ростовра, Курскра, Великие Лукире, Ржевра тата ыттисенче те мĕн пулса иртни çинче кăтартса калаççĕ. Тотальнăй мобилизаци çĕнтерӳ парассине ĕненекенсем çукпа пĕрех. Хăшпĕр салтаксем çапла шутлаççĕ: çав мобилизаци мĕн пурĕ те Германие чăннипех пырса çапас поражение пĕр кĕске вăхăта кăна малалла тăсма пултарĕ, теççĕ».

* * *

[illegible] хули [illegible] Б. Тамарăна Германие каторгăна илсе кайнă. Германире инвалид пулса вăл тăван хулине каялла таврăннă. Вăл çапла каласа панă: «Нимĕçсем мана, манăн йăмăка тата ытти нумай хĕрсене те Германие хăваласа кайрĕç. Эпир унчченех пурте сывă, вăйлă, савăнăçлă çамрăксемччĕ. Германие çитсен, пире бараксенче вырнаçтарчĕç. Баракĕсене 3 рет йĕплĕ пралукпа карса çавăрнă. Эпир йăмăкпа иксĕмĕр, çавăн пекех тата Курск хĕрĕсем Римăпа Соня та пĕр фабрикăра ĕçлеме лекрĕмĕр. Йывăр та асаплă кунсем пуçланса кайрĕç. Чăтмалла мар йывăр ĕçпе асаплантарчĕç пире, темĕнле мăшкăл та тата тĕрлĕрен çитменлĕх те тӳсмелле пулчĕ. Пире михĕрен тунă халат тата йывăç каптăрмаксем пачĕç. Халат çинче «ОСТ» тесе çырса паллă тунăччĕ. Ĕçлессе халран ӳкиччен ĕçлеттеретчĕç, çиме темĕскерле пăтранчăк шыв паратчĕç. Пĕр уйăх хушшинче манăн сывлăх пĕтсе çитрĕ, эпĕ сывмар пултăм, утма та пултараймастăмччĕ. Мана сыватма шутламарĕç те, ĕçе юрăхсăр пирки каялла Курск хулине каять тесе пĕр хут татăкĕ пачĕç. Манăн йăмăк нимĕç пусмăрĕнчех юлчĕ. Эпĕ унран çыру илтĕм. Вăл унта çапла çырнă: «Иксĕмĕр пĕрле чухнехи пекех пурăнатăп. Эпĕ куççуль юхтарса йĕменни пĕр кун та иртмест. Питĕ йывăр. Хамăн ĕлĕкхи пурнăçа асa илсе, эпĕ çапла шухăшлатăп: манăн кунта тата нумайччен пурăнмалла пулать-ши? Пирĕншĕн чарманни нимĕн те çук. Тăвата стена хушшинче, тĕрмене хупнă пек, ларатпăр, пĕр канмасăр ĕçлетпĕр».

Хаклă юлташсем—Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем! Совет çынисен асапĕшĕн, хăвăр тăван йăмăкăрсемпе тăван шăлнусемшĕн тавăрăр нимĕçсене! Вĕсене нимĕç фашисчĕсен тыткăнĕнчен çăлса ирĕке кăларăр!

И. В. Сталин юлташ Джозеф Э. Дэвис господина йышăнни

Майăн 20-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕн личнăй представительне Джозеф Э. Дэвис господина йышăннă. Йышăнура Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ пулнă. Дэвис господина Сталин юлташпа США посолĕ В. Г. Стэндли господин паллаштарнă.

В. М. Молотов юлташ Джозеф Э. Дэвис господина йышăнни

Майăн 20-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕн личнăй представительне Джозеф Э. Дэвис господина йышăннă. Йышăнура Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи Посолĕ Вильям Г. Стэндли господин пулнă.

В. М. Молотов юлташ Куба посланникне А. Кончессо господина йышăнни

Майăн 20-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Куба çĕршывĕн СССР-ти Чрезвычайнăй Посланникне тата Полномочнăй Министрне А. Кончессо господина йышăннă. Йышăну А. Кончессо господин СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне хăйĕн верительнăй грамотисене пама хатĕрленнĕ май пулса иртнĕ.

Çураки планне тултарчĕç

Майăн 20-мĕшĕ тĕлне Сĕнтĕр, Калинино тата Комсомольски районсем çураки планне тултарчĕç. Сĕнтĕр районĕнчи колхозсен план тăрăх 13.397 гектар акмалла пулсан, вĕсем халĕ пурĕ 13.409 гектар акнă. Çураки планĕнчен ирттерсе оборона фончĕ валли 300 гектара яхăн акса хăварнă. Сĕнтĕр МТС-ĕ хăйĕн çуракинчи ĕç планне 101 процент тултарчĕ.

Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевĕсем

ПАХА ИТОГСЕМ

Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕренекен çамрăксем пĕрин хыççăн тепри илемлĕ те çутă классене кĕре-кĕре вырнаçаççĕ. 9 сехет çитмен-ха, звонок пулман. Апла пулин те классем пурте тулнă. Дежурнăй учительницăсем Дария Ивановна Прохоровăпа Серафима Степановна Матвеева класран класа кĕре-кĕре тухаççĕ, класра кам çуккине тĕрĕслеççĕ.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕсем вунă класра пулса иртмелле. Вĕренекенсем пурте килсе çитнĕ. 5-мĕш класра вĕренекен Лев Никольский çеç чирлĕ пирки килмен.

Шкулăн географи, биологи кабинечĕсене карттăсемпе таблицăсем çыпăçтарса тухнă. Хутсем, чернилăсем, ручкăсем тата пĕлӳ тĕрĕслевне ирттермелли ытти пособисем пурте хатĕр.

Звонок. Вĕренекенсем, учительсемпе ассистентсем хăйсен вырăнĕсенче.

6-мĕш «Б» класра географипе пĕлӳ тĕрĕслевĕ пырать. Учительница Ляшко тата унăн ассистенчĕ Евгения Александровна Телешова Галя Софрошкинăран ыйтаççĕ. Ответлесе пĕтерсен, иккĕш те пĕр харăсах «отлично» тесе çырса хучĕç. Галя хăй те асăрхарĕ. Хĕрелчĕ, вăтаннă пек пулчĕ. Мĕн пек ырă, савăнăçлă! Вăл хăй те «отлично» пулассине шаннă. Мĕншĕн тесен çулталăк тăршшĕпех çине тăрса вĕреннĕ. Çавăн пекех Валентин Осипов, Шарко, Словолюбов, Рима Кондратьева, Катя Данилова, — пурĕ 15 вĕренекен «отлично» илчĕç. Класри 36 вĕренекенрен «начар» паллă пĕри те илмен. Ытти 12 вĕренекенĕн пĕлĕвĕсене «лайăх» хак панă.

Биологипе 27 вĕренекенрен 16-шĕ «отлично» тата «хорошо» паллăсем илнĕ. «Начар» паллă илнисем вуçех те çук.

10-мĕш класра алгебрăпа (çыру ĕçĕ) тĕрĕслев пулчĕ. Унти 17 вĕренекенрен 14-шĕ — «отлично», 2-шĕ — «хорошо», пĕр вĕренекен «посредственно» илнĕ. Çакнашкал лайăх результатсем Мария Семеновна Данилова учительницăна тата шкулăн пĕтĕм коллективне мĕнле-ха савăнтармĕç?

7-мĕш «А» тата «Б» классенче вĕренекенсем вырăс чĕлхипе изложени çырчĕç. Вĕсем ку предмета лайăх пĕлнине кăтартса пачĕç. «Начар» паллă илни пĕр вĕренекен те пулмарĕ. Вĕренекенсем советăн хăюллă летчикĕ Макаров çинчен тата тăванла пулăшнă совет хĕрарăмĕн пархатарлă ĕçĕ çинчен ăнланмалла та мухтава тивĕç çырса кăтартнă. Хăйсен ĕçĕсенче вĕренекенсем патриотла шухăш-кăмăлĕсене палăртнă. 7-мĕш «Б» класри (учительница Е. Александрова юлташ) Надя Крысина, Юрий Кириллов, Эмилия Волкова ĕçĕсем уйрăмах паха. Класри 31 вĕренекенрен изложение 25-шĕ «отлично» тата «хорошо» çырнă.

Çар предмечĕпе пулса иртнĕ тĕрĕслевсене шкул директорĕ Валентина Сергеевна хăй хутшăннă. 5-мĕш «Б» класра вĕренекен çамрăксем военрук Смоловик юлташ паракан ыйтусене хăвăрт та тĕрĕс ответлеççĕ. Вĕсем тактикăллă задачăсене пурнăçланă вăхăтра хăйсене Хĕрлĕ Çар боецĕсем пек тытма тăрăшаççĕ. Александр Компанеец, Ала Капустина, И. Потапова вĕренекенсем çар ĕçне юратни, çар предметне питех те лайăх пĕлни курăнчĕ. Класри 27 вĕренекенрен 25-ĕшне «отлично» тата «хорошо» паллăсем панă.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕсен малтанхи кунĕ савăнтарать. Тĕрĕслевсенче пулнă 324 вĕренекенрен 8-шĕ «начар» паллăсем илнĕ пулин те, çак вăтам шкулăн коллективĕ вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш вĕренӳ çулĕнче мухтава тивĕç ĕçлени курăнать.

Николаев.

Республика уйхирĕсенче

Çурхи тырăсене вăхăтра, лайăх акса хăвартăмăр

ИШЛЕЙ. Тивĕш ялсоветĕнчи «Авлан» колхоз членĕсем çуракинче тăрăшса ĕçлерĕç. Пур тырăсене те вăхăтра тата пысăк пахалăхпа акса, çураки ĕçĕсене майăн 10-мĕшĕ тĕлне вĕçлерĕç. 115 гектар тĕштырă акнă. Вăрлăхсен 69,5 процентне яровизацилесе, 35 процентне сеялкăсемпе акса хăварнă.

Çураки вăхăтĕнче социализмлă ăмăрту вăйлăн сарăлса пычĕ. Колхозниксем ăмăртса ĕçлесе, ĕç тухăçлăхне кунран кун ÿстерсе пычĕç. Н. Петрова, А. Абрамова юлташсем 1,10 гектар сухалас вырăнне кулленех 1,20—1,30-шер гектар сухаларĕç. А. Тихонова, П. Семенова колхозницăсем те ĕç нормине 110—120 процент тултарса ĕçлерĕç, тыра акнă çĕрте арçынсем çеç мар, хĕрарăмсем те пысăк пултарулăх кăтартрĕç.

Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне эпир кашни колхозникпе колхозницăна ăнлантарса патăмăр. Çавăн хыççăн колхозра ĕç тухăçлăхĕ татах та ÿсрĕ, колхозницăсем ĕçре дисциплинăллă пулса хăвăрт ĕçлеме пуçларĕç. Çураки планне пурнăçланă хыççăн оборона фончĕ валли 7 гектар тырă акса хăварчĕç, нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă колхозниксемпе колхозницăсем валли колхозран пĕр ĕне, икĕ сысна уйăрса пама, кашни колхозникпе колхозница хăйсен килĕнче пĕрер чăх çитĕнтерсе пама йышăнчĕç, хăйсен тупăшĕнчен 15 центнер çĕрулми пухса станцие леçсе пачĕç.

Тырăсене акса пĕтернĕ хыççăнах çĕрулми тата пахча-çимĕç лартас ĕç те активлăн пулса пычĕ. Малалла колхоз тырăсене çумкурăкĕсенчен сыхлас ĕçе пуçлать тата ирхи çĕртме тума тухать.

И. Волков.

Ирхи çĕртме тума тухрĕç

КАНАШ, майăн 20-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Çурхи тырăсене тата техникăллă культурăсене планпа пăхнă чухлĕ акнă хыççăн Асхвари «Красное пламя», Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан, Катекри Киров ячĕпе тăракан тата ытти чылай колхозсем оборона фончĕ валли 15—20-шер гектар тырă акса хăварчĕç. Паян ку колхозсенче ирхи çĕртме тума тытăннă.

Колхозниксемпе колхозницăсем, Сталин юлташăн приказне пурнăçа кĕртсе пырса, çуракинче нихăçанхи пек мар хастарлăн ĕçлерĕç. Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕ 62 çулхи Н. Кондратьев юлташ çуракинче ĕç нормине кулленех 120—150 процент тултарса ĕçлерĕ. Вунă кун хушшинче вăл 22 ĕçкунĕ ĕçлесе турĕ. А. Михайлов колхозник кулленех 4—5-шер гектар тырă акрĕ.

Çуракинче хастарлăн ĕçленĕ колхозниксем халь хăйсен пĕтĕм пултарулăхĕпе вăйне ирхи çĕртме сухине хăвăрт туса пĕтерес ĕçе хураççĕ. Ирхи çĕртме сухи тунă çĕрте те вĕсем кулленхи нормăна ирттерсе тултарса пыраççĕ.

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) лашасен йышне ÿстерес тĕлĕшпе йышăннă постановление сÿтсе-яваççĕ

Лашасене пăхас ĕçри çитменлĕхсене пĕтереççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (**Хамăр корр.**). Лашасен йышне ÿстермелли мерăсем çинчен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановление Тĕрер ялсоветĕнчи пур колхозсенче те активлăн сÿтсе-яваççĕ. Колхозниксем иртнĕ вăхăтра пулнă çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтермелли мерăсене палăртаççĕ. Сăмахран, «Пчелкино» колхозра пĕтĕ кĕсресене типтерлĕн тыткаламан, зоотехника хушнă пек пăхман. Çакăн пирки вара 4 кĕсре кăçал хăм парахнă, пĕр тиха вăхăтсăр çуралса вилнĕ. Çакнашкал çитменлĕхсем «Красная Чувашия» колхозра та пулнă. Иртнĕ кĕркуннепе хĕлле кунта 4 тиха вилнĕ.

Çакăн пек çитменлĕхсем вĕсем йăлтах лашасен йышне ÿстерес ĕç çине çиелтен пăхнă пирки пулса пынă. Кĕсресене хăçан чуптарса хăварнине асăрхаман, вĕсене ответсăррăн пăхнă, ним уямасăр пур ĕçе те турткаланă, йывăр ĕçсене кÿлнĕ.

«Буйга» колхозра лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас тĕлĕшре халĕ те обезличка пур-ха. Колхозăн лашисемшĕн кунта халĕ те ответ тытакан çук. Кама хăшĕ килĕшет, вăл никамран ыйтса тăмасăрах кÿлет те тухса каять.

«Труд» колхозра транспорт инвентарĕсемпе хăмăт-пăявсем çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем партипе правительствăн постановленине сÿтсе-явса, лашасен йышне ÿстерес тата вĕсемпе тĕрĕс усă курас тĕлĕшпе ĕçлеме пуçларĕç. Транспорт инвентарьне тата лашасем кÿлмелли хăмăт-пăявсене юсама тытăнчĕç. Ялсоветри колхозсем уборкăна хатĕрленсе халь çĕнĕрен 60 урапа тунă.

С. Шадин.

Лашасене таса тытса усрать

Альцов Прокопий Дементьевич Елчĕк районĕнчи «Комбайн» колхозра лашасене пăхать. Вăл çак ĕçре 13 çул хушши ĕçлет ĕнтĕ. Çулран çулах вăл пăхакан лашасем мăнтăр та таса, тихасем тĕреклĕ ÿссе пыраççĕ. Альцов юлташ вĕсене кулленех хырчăкласа тасатать, яланах тутă тытать, шăварать. Лаша витисене яланах таса тытать.

Альцов юлташ пăхса çитĕнтернĕ лашасем пурте Хĕрлĕ Çара юрăхлă пулнă. Хăйĕн типтерлĕ ĕçĕпе вăл Хĕрлĕ Çара пулăшать. Вăл çитĕнтерсе панă лашасемпе халĕ фронтра пирĕн боецсем гитлеровецсене пĕтерсе пыраççĕ. Альцов колхозникĕн хисеплĕ ĕçне пахаласа колхоз правленийĕ ăна 11 хутчен преми парса паллă тунă, виçĕ хутчен вăл грамота илме тивĕçлĕ пулнă.

1942 çулта Альцов юлташ 528 ĕç кунĕ ĕçлесе тунă. Кăçал та вăл колхозра фронта тивĕçлĕ пек ĕçлет.

К. Доброхотова,
Райсовет депутачĕ.

Фронта кирлĕ пек ĕçлеççĕ

«Доброволец» колхоз канцелярийĕнче паян та счетовод кăна ларать. Ыттисем пурте уйра.

Колхоз председателĕ П. Бочков юлташ, ватă çын, паян кăнтăрлаччен çурхи тырăсем мĕнле шăтса тухнине пăхса çÿрерĕ. Аван шăтса тухрĕç кăçал тырăсем, тип-тикĕс ÿсеççĕ. Çакă вăл колхоз председательне çеç мар, пĕтĕм колхозниксене савăнтарать. Никам та мар, вĕсем вăй хурса, çураки вăхăтĕнче канма пĕлмесĕр ĕçлерĕç.

— Сталин юлташ пире ĕçри хастарлăха икĕ хут ÿстерсе ĕçлеме хушать. Çавна эпир тивĕçлипе пурнăçлăпăр, — тенĕ колхозниксем, çулпуçăн приказĕпе паллашса.

Вĕсем çуракине тĕплĕн хатĕрленсе, вăхăтра тухнă. Кашни кун уйра ир пуçласа каçчен 75—80 лашапа ĕçленĕ. Колхозниксем кашни минутăна шутра тытса хĕрÿллĕн ĕçленĕ. Çак майпах колхозăн столовăйĕ те уйра ĕçлекен колхозниксене пĕр çĕре пухса мар, бригадăсем тăрăх çÿресе апатланă.

План тăрăх колхозăн кăçал çурхи тырăсене 343 гектар акса хăвармаллаччĕ. Тухăçлăн ĕçлесе, колхозниксем 400 гектар ытла акса хăварма ĕлкĕрчĕç. Кунсăр пуçне тата 24 гектар çĕрулми лартрĕç, 18 гектар кантăр, 16 гектар вика акрĕç. Çак ĕçсене колхоз шăп 10 кун хушшинче туса пĕтерчĕ.

— Кăçалхипе эпĕ председательте виççĕмĕш çул ĕçлетĕп. Анчах колхозниксем хальхи пек хастарлăн ĕçленине курман,—тет П. Бочков юлташ.

Колхозăн 6 бригада. Вĕсем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ, ăмăрту итогĕсене ĕç пынă май тĕрĕслесех тăраççĕ. Çуракинче комсомолец Иван Кошкин юлташ ертсе пыракан пĕрремĕш бригада малта пычĕ. Çураки планне вăл 8 ĕç кунĕнче вĕçлерĕ. Çак бригадăри колхозницăсем Е. Винокурова, Я. Сахарова, Р. Соколова, А. Курмашин сухаçăсем кулленех 1,5-шер гектара çити сухаласа пычĕç. Е. Кудрявцева юлташ куллен ĕç нормине 150 процент тултарса ĕçлерĕ, вăл сеялкăпа тырă акрĕ.

Халĕ колхозра ĕç малалла пырать. Тĕштырăсемпе техникăллă культурăсене акса пĕтернĕ хыççăнах бригадăсем ирхи çĕртме сухи тума пуçларĕç. Çуракинчен пушанна лашасем пурте халь каллех сухара. Паянхи куна 25 гектар сухаланă та ĕнтĕ.

Пахча-çимĕç бригади те паян-ыранах пур çимĕçсене те лартса пĕтерет. 28 колхозник хĕрсех арман пĕви валли йывăç касаççĕ. Ыран-виçмине вĕсем арманăн пĕвине юсама тытăнаççĕ.

Вырăс Сорăмĕнчи «Доброволец» колхоз районра пысăк колхозсенчен пĕри. Унăн чи лайăх çыннисем фронтра, тăван çĕршывăн чыслăхĕшĕн çапăçаççĕ. Колхозниксем аван пĕлсе тăраççĕ: тăшмана çапса çĕмĕрме совет çыннисен фронтра та, тылра та пĕр пекех хастарлăн кĕрешес пулать, ытларах та ытларах вăй хурса ĕçлес пулать. Çавăнпа та вĕсем çуракинче организованно ĕçлерĕç тата ялхуçалăхĕнчи ытти мĕнпур ĕçсене те вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек пысăк пахалăхпа туса ирттерме тăрăшаççĕ.

Х. Лисни.
Элĕк районĕ. (**Хамăр корр.**).

Парти пурнăçĕ

КОЛХОЗ ПРОИЗВОДСТВИНЕ ЛАЙĂХ ЕРТСЕ ПЫРАКАН ПАРТОРГАНИЗАЦИ

ТАВАЙ. Партин Çĕнĕ Тăрмăшри «Мартăн 8-мĕшĕ» колхозри пуçламĕш организацийĕ колхоз производствин чăн-чăн организаторĕ пулса тăрать. Кунти коммунистсем колхоз производствипе тачă çыхăнса тăраççĕ, ăна лайăх ертсе пырассишĕн кĕрешеççĕ.

Иван Евдокимов — колхоз председателĕ, Григорий Фомин — ферма заведующийĕ, Андрей Кириллов —пахча-çимĕç бригадин бригадирĕ, С. Фомина — доярка пулса, массăсене хăйсем пек ĕçлеме вĕрентеççĕ, колхозниксем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе туса пыраççĕ, пĕтĕм ĕçе фронта пулăшас ыйтупа çыхăнтараççĕ.

Ахальтен мар ĕнтĕ ку колхоз малта пыракан колхозсен шутĕнче тăрать. Парторганизаци ертсе пынипе, колхоз çуракине пысăк пахалăхпа тата кĕске срокра—6 кун хушшинче туса ирттерчĕ. Оборона фончĕ валли 2 гектар тырă акрĕ.

Колхозри ĕç дисциплини çирĕпленчĕ. Колхозниксем пурте пекех çураки вăхăтĕнче фронтри пек ĕçлерĕç. Вĕсенчен уйрăмăнах 68 çулхи Гордей Русин, фронтовик арăмĕ Варвара Тихонова тата Емельян Шухин колхозниксен паха ĕçĕсене палăртмалла.

Колхоз çуракине ăнăçлăн ирттернĕ хыççăн уборкăна хатĕрленме, выльăх-чĕрлĕх витисене юсама тытăнчĕ. Кăçал 45 пуç ĕне, 60 сурăх тата 10 пăру вырнаçмалăх витесем çĕнĕрен лартма материалсем хатĕрленĕ. Кунсăр пуçне кĕçех фермăра ĕçлекенсене пурăнма çурт туса пĕтереççĕ.

Ферма заведующийĕ, ВКП(б) пуçламĕш организацин секретарĕ Г. Фомин юлташ хăйĕн ĕçне юратса тăвать. Вăл ертсе пынипе 1943 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ферма ирттерсе пурнăçларĕ. Халĕ фермăра майракаллă шултăра выльăхсем 38 пуç, сыснасем 93 пуç, сурăхсем 54 пуç тата 86 чăх пур. Кунсăр пуçне утарта 33 вĕлле хурт-хăмăр пур.

Колхоз государствăна 1943 çулшăн аш-какай тата тырă парса татнă, çăмарта памалли плана 50 процент пурнăçланă.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçланипе пĕрлех, «Свободный труд» колхоза 30 центнер вăрлăх парса пулăшрĕ.

В. Чернов.

Çамрăксене комсомол ретне илессине вăйлатмалла

КАЛИНИНО. Еçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕ çумĕнчи комсомол комитечĕ (секретарĕ Г. Лезова юлташ) хăйĕн ĕçне тивĕçлипе туса пымасть. Çулталăк хушшинче пĕр çамрăка та комсомол ретне илмен. Комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕсем темиçе уйăхран кăна пулкалаççĕ.

Комсомол организацинче мĕнпурĕ 12 комсомолец. Райсоветра комсомол ретне илмелли çамрăксем сахал мар. Вĕсемпе куллен ĕçлесе пыни çеç кирлĕ.

Пуçламĕш парторганизаци (секретарĕ В. Игнатьев юлташ) ку тĕлĕшпе начар ĕçлет. Комсомол организацине çителĕксĕр пулăшса пырать.

Комсомол организацин ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла. Малта пыракан çамрăксене комсомол ретне илессине вăйлатмалла.

Б. Шорников.

Чугунçул çинче ĕçлекенсен уявне тивĕçлипе кĕтсе илер

УЛАТАР. Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне депо коллективĕ производствăра çĕнĕ çĕкленÿпе ĕçлесе ответлет. Машинист Рузанов юлташ поезда яланах çирĕп графикпа вырăна çитерсе, 10 процент топливо перекетлет. Машинист-инструктор Козлов юлташ хăйĕн ĕçне пысăк пахалăхпа туса пынипе çеç лăпланмасть, вăл тата кочегарсене слесарь ĕçне вĕрентет.

— Ĕçре нимĕнле чăрмав та ан пултăр тесен, пирĕн хамăрăн специальноçа çеç пĕлни çителĕксĕр, — тет вăл.

Депо коллективĕ чугунçул çинче ĕçлекенсен уявне тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн хастарлăн ĕçлет, уяв тĕлне икĕ паровоза срокчен юсаса çитерме обязательство илчĕ.

Н. Бодров.

„Патрон“ артелĕн ĕçне лайăхлатмалла

ШАХАСАН. Матьшÿри инвалидсен «Патрон» артелĕ иртнĕ çулсенче начар мар ĕçленĕ. Кашни уйăхрах производство программине тултарса пынă. Иртнĕ çулсенче кунта колхозсем валли урапа сĕрмелли маçсем тунă, тăмран чашăк-чÿлмексем туса тăнă. Вĕренсемпе кантрасем явас ĕçе те организациленĕччĕ. Юлашки вăхăтра ĕçсем пачах урăхланчĕç. Продукци кăларас тĕлĕшпе артель март уйăхĕнчи ĕç планне 6 процент çеç тултарнă. Апрель уйăхĕнче вара ĕçе пачах чарса лартнă.

Мĕншĕн-ха артель ĕçĕсем çакăн пек япăхса кайнă? Малтанах калас пулать, артельте ĕç дисциплини П. Бондарев юлташ артель председателĕ пулса ĕçлеме пуçланăранпах сÿрĕк пулнă, рабочисемпе работницăсем хушшинче организациллĕ-ăнлантарулă ĕçе туса пыман. Артель членĕсен ĕçлес хастарлăхне ÿстерсе пырас вырăнне вĕсене темиçе уйăхшар ĕçукçи памасăр тăнă.

Çак ĕçе ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ лайăх пĕлсе тăнă, анчах артель ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе нимĕнле татăклă мера та йышăнман. Райсовет исполкомĕн вырăнти промышленность отделĕ те (заведующийĕ П. Фомин) «Патрон» артель ĕçĕсемпе интересленмен.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче производствăна ним сăлтавсăр чарса лартни киревсĕр ĕç пулса тăрать. Райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕн ку ĕçе майласа ярса малашне ăна оперативно ертсе пымалла.

В. Веселов.

УЙĂХРИ ПЛАНА СРОКЧЕН ТУЛТАРАТПĂР

ВАРМАР. (**Телефонпа**). Крахмал завочĕн коллективĕ май уявĕ умĕнхи ăмăртура хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Производство планне 5 кун маларах пурнăçларĕ.

Юлашки вăхăтра рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту çĕнĕрен вăйланса кайрĕ.

— Эпир çулпуçăн Сталин юлташăн приказĕ çине ĕçпе ответлетпĕр, уйăхри ĕç планне 10 кун малтан пурнăçлатпăр, — терĕç митингра тухса каланă рабочисемпе служащисем.

Ăмăртăвăн результачĕ виçĕ кун хушшинчех палăрчĕ. Халиччен хăйсен нормисене тултарса пырайман рабочисем те заданисене ытлашшипех пурнăçлама тытăнчĕç. Акă, крахмал цехĕнче ĕçлекен К. Михайлова, Е. Хайбулина, Е. Николаева, М. Гаврилова юлташсем ĕç пахалăхне хăпартса, нормăна 120 процент тултараççĕ. Иртнĕ уйăхра завод крахмал туса кăлармалли плана 107 процент тултарчĕ. Май уйăхĕнче производство планне 115 процента çити пурнăçлама пулчĕ.

Г. Софронов.

Ăмăртса ĕçлеççĕ

Шупашкарти пристань çинче ĕçлекенсем Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ çине ответлесе, тата хастарлăрах ĕçлеме пуçларĕç, пароходсем çине грузсем тиессине хăвăртлатрĕç. Шкиперсем Скрябин, Ляпин, Малышев юлташсем ĕçре паха примерсем кăтартаççĕ. Çавăн пекех Федоров, Терентьев, Бушков матроссем те йывăр условисем килсе тухсан та ĕçе тĕплĕн туса пыраççĕ. Кочегарсем Клинчук, Шеманова юлташсем ĕç тухăçлăхне хăпартсах пыраççĕ. Ĕçлекенсем хушшинче ăмăрту сарăлса пырать.

С. Валатин.
Пристань начальникĕ.

США Президенчĕн личнăй представителĕ Дэвис господин Сталинграда пыни

СТАЛИНГРАД, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Майăн 18-мĕшĕнче Сталинграда Куйбышевран США Президенчĕн личнăй представителĕ Джозеф Э. Дэвис господин пынă. Дэвис господин Сталинградшăн çапăçса вилнĕ боецсен вилĕ тăприне пырса курнă. Вилĕ тăпри çине чечексем хурсан, Дэвис господин пухăннă Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе Сталинград çыннисене сакăн пек сăмах каланă:

«Туссем! Эпĕ геройсен хулине курма килтĕм. Çак хулана хÿтĕлекен çынсем нимĕçсене тытса чарма пултарчĕç. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Президенчĕн Рузвельтăн ячĕпе тата США халăхĕ ячĕпе вилнĕ геройсен вилĕ тăпри çине эпĕ чечексем хуратăп. Совет Союзĕн, США-н тата Великобританин халăхĕсем хăйсен çулпуçĕсем ертсе пынипе Гитлера аркатса тăкĕç.

Мухтав совет салтакĕсене!»

Ют çĕршывсенче

НОКС ТУХСА КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тинĕс-çар министрĕ Нокс Бостон хулинче сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Тăшманăн Европăри тата Азири тĕп укреплениййĕсене тапăнма пуçлас сехет çывăхарса килет», тенĕ. Пĕрлешÿллĕ нацисем тăшмана тулти бастионсенче çĕмĕрсе тăкрĕç ĕнтĕ, тенĕ малалла Нокс. Халĕ вĕсем тăшманăн коммуникаци линийĕсем çинче унран хăватлăрах пулса пыраççĕ. Унтан Нокс çакна асăрхаттарнă: пулас наступлениллĕ операцисенче йывăр çухатусем пулĕç, çав наступленире союзниксен пурин те пĕр-пĕринпе килĕшсе пĕр шухăшлă пулмалла, çавăн пекех Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи мĕнпур халăхăн та пĕр кăмăллă пулмалла. США тăшманăн ирсĕр ĕçĕсене манман. Нокс тата çакна кăтартса панă: тăшман «мирлĕ наступлени» туни американецсене вăрçă тĕлĕшпе тата вăйлăрах ĕçлеме хавхалантарать, тенĕ. Юлашкинчен Нокс çакна çирĕплетсе каланă: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем тăшмана тĕппипех аркатса тăкиччен вăрçма пăрахас çук, тенĕ.

СОЮЗНИКСЕМ ТУНИСРА МĔН ЧУХЛĔ ÇЫН ТЫТКĂНА ИЛНИ ÇИНЧЕН ЭЙЗЕНХАУЭР ГЕНЕРАЛ КАЛАСА ПАНИ

ЛОНДОН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен главнокомандующийĕ Эйзенхауэр генерал майăн 18-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: Тунисра тыткăна илнисен шучĕ пĕтĕмпе 200.000 çынран иртсе каять. Унсăр пуçне, трофейăсем чылай тытса илнĕ, вĕсене халĕ шута илеççĕ.

ФРАНЦУЗ САРĔСЕМ ЛА ГАЛИТ УТРАВНЕ ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, французсен тинĕс-çар чаçĕсем Ла Галит утравне йышăннă. Çав утрав Серат ятлă сăмсахран (Тунис) 40 километр çурçĕр хĕвеланăçнерехре выртать.

ОБЩИНĂСЕН ПАЛАТИНЧЕ РИМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХАССИ ÇИНЧЕН ЫЙТСА ПĔЛНИ

ЛОНДОН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатинче çакăн пек ыйтнă: Италие сывлăшран тапăнмалли плана Рим çине бомбăсем пăрахасси кĕрет-и? Рим вăл — тĕп хула тата вăл стратеги тĕлĕшĕнчен паллă вырăн йышăнса тăрать вĕт, тенĕ. Авиаци министрĕн заместителĕ Бальфур çапла ответленĕ: Рим çине бомбăсем пăрахмĕç тесе шутлама нимĕнле сăлтав та çук. «Ĕç пачах урăхла, — тенĕ Бальфур, — ку таранччен каланă пекех, эпир вăрçă пынă май Рим çине бомбăсем пăрахни кирлĕ тата усăллă пулса тăнă вăхăт çитсенех ун çине ним иккĕленсе тăмасăр бомбăсем тăкма пуçлăпăр», тенĕ.

ИТАЛИРИ ФАШИСТЛА ПАРТИ АРКАНАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Италири официальнăй даннăйсем тăрăх çырнă статьяра «Ньюс Уик» журнал Италири фашистла партин хисепĕ хăвăрт чакса пыни çинчен пĕлтерет. Секретарь пулса ĕçленĕ Видуссони йышăннă тăрăх, фашистла партин тата унпа çыхăнса тăракан организацисен хисепĕ икĕ хут ытла чакнă. Фашистла хĕрарăм организацийĕ юлашки çулта хăйĕн йышĕн виçĕ пайĕнчен икĕ пайне çухатнă.

Нумайĕшне партирен поражениллĕ шухăш-кăмăлсем палăртнăшăн кăларса пăрахнă. Пиншер фашистсем, хальхи вăрçăра Италие аркатса тăкассине курса, путакан карап çинчен йĕкехÿресем тарнă пекех тараççĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла Америкăн йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Кильри тата Фленсбургри (Германия) верфьсене атакăланă. Вăйлă пушарсем тухнине паллă тунă. Çавăнта пуçланса кайнă сывлăшри çапăçура тăшманăн истребителĕсене нумай пĕтерсе тăкнă.

Киль—Германин подводнăй лодкăсем тăвакан центрĕсенчен пĕри. Вăл çав центрсем хушшинче иккĕмĕш вырăн йышăнса тăрать. Кильри ишсе çÿрекен доксем Германири доксенчен чи пысăккисем шутланаççĕ.

Англи авиацийĕ майăн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Берлинри тĕрлĕ объектсене атакăланă.

Çав çĕрех Англи истребителĕсем тăшманăн çурçĕр Францири аэродромĕсене тата Франципе Бельгири чугунçулсемпе каналсене тапăннă.

Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче союзниксен авиацийĕ Сицилире тата Сардинире тăшманăн аэродромĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă. Пур объектсенче те вăйлă пушарсем тухни палăрнă. Çĕр çинче пулнă самолетсене нумай пĕтернĕ. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 28 самолетне персе ÿкернĕ.

ТИНĔС ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин «Адвенчюр» тата «Глазго» крейсерĕсем Атлантика океанĕн Испани çумĕнчи районĕнче тата Гренланди çывăхĕнче Германин 2 çар суднине путарнă. Вĕсен водоизмещенийĕ 13.000 тоннăна яхăн. Пĕр суднин экипажне пĕтĕмĕшпех тыткăна илнĕ. Тепĕр пароходĕн экипажĕнчен 6 çынна кăна çăлнă. Икĕ судни те инçетри Хĕвелтухăçĕнчен груз турттарса пынă пулнă.

АМЕРИКА ВОЙСКИСЕМ АТТУ УТРАВĔ ÇИНЧЕ КĔРЕШНИ

ЛОНДОН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тинĕс-çар министрĕ Нокс майăн 18-мĕшĕнче çапла каланă: Атту утравĕ çинче Америка войскисем японецсем çирĕпленсе ларнă Скалистăй Хребета йышăнса илнĕ. Америка войскисем халĕ японецсен тĕп позицийĕсене атакăлаççĕ, тенĕ.

РУР ОБЛАÇНЕ ШЫВ ИЛНĔ

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИРИ ДАМБĂСЕНЕ ИШĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи авиацийĕ тапăнса Хĕвеланăç Германири дамбăсене ишĕлтернине пула шыв çырансенчен тухса сарăлса кайса Рур облаçĕн центрнех çитнĕ. Рейн тата Везер юханшывĕсенче шыв питĕ хăвăрт хăпарса пырать. Пысăк промышленность центрĕсем чылайĕшĕ шыв вăйлăн кĕрлесе пырса çапнипе чарăнса ларнă. Шыв илнĕ районсенче пĕтĕмпе 5,5—6 миллион çын пурăнать. Шыв илнипе халĕ хăшпĕр районсем татăлса юлса уйрăм утравсем пек пулса тăнă.

Пĕлтерÿ

Майăн 24-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Горкомĕн Парткабинетĕнче (Чувашская ур., 6). Пĕтĕм хулари агитколлективсен руководителĕсен семинарĕ пулать. Семинарта çакăн пек докладсем пулаççĕ:

1. **Сталин юлташăн приказĕ — Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕн тăшмана çапса аркатмалли ĕçĕсен боевой программи»** темăпа лекци пулать.
2. **Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне вĕренесси** мĕнле пыни çинчен доклад пулать.

Предприятисемпе учрежденисенчи агитколлективсен руководителĕсен семинара обязательнăй йĕркепе пымалла.

ВКП(б) Горкомĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

Ш1 1336 Типография № 1, Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР Заказ № 3 Ф. б. 53. 12 п.